25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ИЮЛЬ 31 ЭРНЕКУН 177 (6112) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ

Военнăй орденсем: пĕррремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш степеньлĕ СУВОРОВ ОРДЕНĔ, пĕррремĕшпе иккĕмĕш степеньлĕ КУТУЗОВ ОРДЕНĔ тата АЛЕКСАНДР НЕВСКИЙ ОРДЕНĔ тăвасси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Президиумĕ **çапла йышăнать:**

1. Боевой операцисене организацилесе тата ертсе пырас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ питех те паллă ĕçсем тунăшăн тата çав операцисене ирттерсе тăван çĕршывшăн пыракан çапăçусенче çитĕнӳсем тунăшăн Хĕрлĕ Çарăн командирĕсене наградăлама çакăн пек военнăй орденсем тăвас:

Пĕррремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш степеньлĕ **Суворов орденĕ;**

Пĕррремĕш тата иккĕмĕш степеньлĕ **Кутузов орденĕ;**

Александр Невский орденĕ.

2. Пĕррремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш степеньлĕ **Суворов орденĕн** статутчĕпе ун çинчен çырса кăтартнине çирĕплетес.

3. Пĕррремĕш тата иккĕмĕш степеньлĕ **Кутузов орденĕн** статутчĕпе ун çинчен çырса кăтартнине çирĕплетес.

4. **Александр Невский орденĕн** статутчĕпе ун çинчен çырса кăтартнине çирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июлĕн 29-мĕш.

СУВОРОВ ОРДЕНĔН СТАТУЧĔ

1. **Суворов орденне** Хĕрлĕ Çарăн командирĕсене— войскăсене ертсе пырас ĕçре питех те палăрса тăракан çитĕнӳсем тунăшăн. боевой операцисене отлично организациленĕшĕн тата вĕсене туса ирттернĕ çĕрте çирĕплĕхпе хастарлăх кăтартнăшăн, çавна май тăван çĕршывшăн пыракан отечественнăй вăрçăри çапăçусенче çĕнтерӳ тунăшăн параççĕ.

2. **Суворов орденĕпе** СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх наградăлаççĕ.

3. **Суворов орденĕ** виçĕ степеньрен тăрать:

I-мĕш степеньлĕ **Суворов орденĕ,**

II-мĕш степеньлĕ **Суворов орденĕ,**

III-мĕш степеньлĕ **Суворов орденĕ.**

Орденăн чи пысăк степенĕ 1-мĕш степень пулса тăрать.

4. I-мĕш степеньлĕ **Суворов орденĕпе** çаксене наградăлаççĕ—

Фронтсен тата армисен командующийĕсене, вĕсен заместителĕсене, штабсен начальникĕсене, оперативнăй управленисен тата оперативнăй отделсен начальникĕсене, тĕрлĕ йышши войскăсен (артиллерин, сывлăшри вăйсен, бронетанковăй тата минометнăй войскăсен) начальникĕсене:

Фронтăн е армин операцине отлично организацилесе туса ирттернĕшĕн, çав операцире сахалтарах вăйсемпех противникăн йышлăрах вăйĕсене çапса аркатнă пулсан.

Противникăн йышлăрах вăйĕсене çавăрса илес тĕлĕшпе ăста маневр туса ирттернĕшĕн, противникăн чĕрĕ вăйĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнăшăн тата унăн хĕçпăшалĕсемпе техникине тытса илнĕшĕн.

Тăшмана пырса çапмалли тĕп вырăна суйласа илес тĕлĕшпе пуçарулăхпа çирĕплĕх кăтартнăшăн, çавăн пек пырса çапассине туса ирттернĕшĕн, çавна пула противника аркатса тăкнă пулсан тата пирĕн войскăсем противника малалла йĕрлесе хăвалама хăйсен çапăçури пултарулăхне упраса хăварнă пулсан.

Противника хирĕç вăрттăн та ăста операци туса ирттернĕшĕн, çавна пула противника, хăйĕн вăйĕсене йĕркелеме тата çапăçăва резервсем кĕртме май памасăр, аркатса тăкнă пулсан.

5. II-мĕш степеньлĕ **Суворов орденĕпе** çаксене наградăлаççĕ—

Корпуссен, дивизисемпе бригадăсен командирĕсене, вĕсен заместителĕсене тата штабсен начальникĕсене:

Хĕçпăшалсемпе техникăна тата чĕрĕ вăйа пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнтарса пырса, тăшман çине кĕтмен çĕртен те татăклăн пырса тапăнса, тăшманăн корпусне е дивизине сахалтарах вăйсемпех аркатса тăкмалли çапăçăва организациленĕшĕн.

Противникăн оборона тумалли ку чухнехи полосине çĕмĕрсе татса кĕнĕшĕн, татса кĕнĕ хыççăн çапăçăва малалла аталантарса пынăшăн тата противника хыçран йĕрлесе пырса, çавăрса илсе пĕтерсе тăкас ĕçе организациленĕшĕн.

Противникăн йышлăрах вăйĕсем çавăрса илнĕ çĕрте çапăçу организациленĕшĕн, çавăн пек çавăрса илнĕ çĕртен татса тухнăшăн тата хăйсен чаçĕсен çапăçури пултарулăхне, вĕсен хĕçпăшалĕсемпе техникине упраса хăварнăшăн.

Бронетанковăй соединени тăшманăн тылне инçете кĕрсе кайса рейд тунăшăн, çавăн пек тунипе армин операцине ăнăçлăн пурнăçа кĕртме май парса, противника сисĕнмеллех вăйлăн пырса çапнă пулсан.

6. III-мĕш степеньлĕ **Суворов орденĕпе** çаксене наградăлаççĕ—

Полксен, батальонсен командирĕсене тата полксенчи штабсен начальникĕсене:

Йышлăрах вăйлă противника хăюллăн та хăвăрттăн атакăлама тата ăна пĕтерсе тăкма кирлĕ саманта суйласа илсе çапăçу организациленĕшĕн тата çак тĕлĕшпе пуçарулăх кăтартнăшăн.

Йышăннă рубежсене тытса тăнă çĕрте противникăн йышлăрах вăйĕсен наступленине вăйлăн хирĕç тăнăшăн тата наступление пĕтĕмĕшпех сире-сире пырса кĕрешнĕшĕн, кĕрешӳри мĕнпур средствăсене тăшмана хирĕç пĕлсе кăларса тăратнăшăн тата татăклă атакăна куçнăшăн.

Суворов орденĕ çинчен çырса кăтартни

1. I-мĕш степеньлĕ Суворов орденĕн знакĕ платинăран тунă, кăшт тулалла мăкăрăлса тăракан пилĕк вĕçлĕ çăлтăр пулса тăрать, çăлтăрăн çийне аяккалла сапаланакан пайăркасемпе витĕнтернĕ.

Çăлтăр варринче, пĕчĕк кăшăл ăшĕнче, ылттăнран тунă çаврашка, çаврашкан çӳлти пайĕ çине **«Александр Суворов»** тесе çырса хунă.

Çаврашкан аяларахри пайне лаврăпа юман çулçисен венокĕпе, ылттăнран тунăскерпе, витĕнтернĕ.

Çаврашкан варрине Суворовăн ылттăнран шăратса тунă сăнне (кăкăр таран) вырнаçтарнă. Орденăн пысăкăшĕ — çăлтăрăн пĕр вĕçĕнчен пуçласа тепĕр вĕçне çитиччен—56 миллиметр.

Орденăн знакне унăн çăртинчен тата звенoран витĕрсе илсе хĕрлĕ муаровăй лентăпа витĕнтернĕ пластинкăпа çыхăнтарнă. Ордена тумтир çумне çакма пластинкăн тепĕр енче винтăласа каснă штифтпа гайка пур.

2. II-мĕш степеньлĕ Суворов орденĕн знакне ылттăнран туса хатĕрлеççĕ. Çăлтăр варринче çаврашка пур, Суворовăн сăнне тата венока кĕмĕлтен шăратса тăваççĕ.

3. III-мĕш степеньлĕ Суворов орденне—пĕтĕмĕшпех кĕмĕлтен туса хатĕрлеççĕ.

КУТУЗОВ ОРДЕНĔН СТАТУЧĔ

1. **Кутузов орденне** Хĕрлĕ Çарăн командирĕсене фронтăн, армин, уйрăм соединенин операцийĕсен планне лайăх туса хатĕрлесе пурнăçа кĕртнĕшĕн, çав плана пурнăçа кĕртнине пула противника йывăр сиен кӳнĕ пулсан, пирĕн войскăсем вара хăйсен çапăçури пултарулăхне упраса хăварнă пулсан, параççĕ.

2. **Кутузов орденĕпе** СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх наградăлаççĕ.

3. **Кутузов** орденĕ икĕ степеньрен тăрать:

I-мĕш степеньлĕ **Кутузов орденĕ,**

II-мĕш степеньлĕ **Кутузов орденĕ.**

4. I-мĕш степеньлĕ **Кутузов орденĕпе** çаксене наградăлаççĕ—

Фронтсен тата армисен командующийĕсене, вĕсен заместителĕсене тата штабсен начальникĕсене:

Фронтăн е армин операцийĕ лайăх йĕркелесе туса ирттернĕшĕн, çавна май тăшмана поражени кӳнĕ пулсан.

Пысăк соединенисем ирĕксĕрех каялла чакмалли плана лайăх йĕркелесе туса ирттернĕшĕн, çавăн чухне тăшмана хирĕç хăватлăн та массăллăн пыра-пыра çапса тăшмана йывăр çухатусем кӳнĕшĕн тата хăйсен войскисене, техникăна чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен сахал çухатусем туса, çĕнĕ çапăçăва кĕме пĕтĕмĕшпех хатĕр тăрса, çĕнĕ рубежсем çине илсе тухнăшăн.

Противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе пысăк соединенисен операцийĕсене пĕлсе организациленĕшĕн, противникăн войскисене хăлран ярса пынăшăн, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пынăшăн тата хăйсен войскисене упраса хăварса, татăклă наступление куçма яланах хатĕр тытнăшăн.

5. II-мĕш степеньлĕ **Кутузов орденĕпе** çаксене наградăлаççĕ —

Корпуссен, дивизисен, бригадăсен командирĕсене тата штабсен начальникĕсене:

Тăшманăн йышлăрах вăйĕсем наступлени туса килнине хирĕç тăнă çĕрте çавтери чăтăмлă та çирĕп пулнăшăн, хĕçпăшалсене пĕлсе йĕркелесе вырнаçтарса тухнипе, вырăнпа усă курса, чĕрĕ вăйсемпе танксем тата авиаци енчен тăшмана хирĕç пыра-пыра çапса, йышăннă позицисене алăрах тытса тăнăшăн, кайран татăклă та ăнăçлă наступление куçнăшăн.

Управлени ĕçне лайăх организациленĕшĕн тата çапăçăвăн йывăр обстановкинче татăклă участокра тăшманăннинчен ытларах вăй пуxса тăратса, войскăсем пĕр-пĕринпе лайăх çыхăнса ĕçленипе противника йывăр поражени тӳстернĕшĕн.

Противникăн йышлăрах вăйĕсем çавăрса илнĕ çĕрте пĕлсе çапăçнăшăн тата хăйсен войскисене çĕнĕ çапăçăва кĕме пĕтĕмĕшпех хатĕр тытса, ça-

Противникăн йышлăрах вăйĕсене ки-

вăрса илнĕ çĕртен татса тухассине организациленĕшĕн.

Противникăн йышлăрах танкĕсене е сывлăшри йышлăрах вăйĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешсе, тăшмана пысăк сиен кӳнĕ тата ăна ирĕксĕрех каялла чактарнă пирĕн чаçсен çапăçури ĕçĕсене пĕлсе организациленĕшĕн.

Кутузов орденĕ çинчен çырса кăтартни

1. 1-мĕш степеньлĕ Кутузов орденĕн знакне ылттăнран тăваççĕ, вăл кăшт тулалла мăкăрăлса тăракан пилĕк вĕçлĕ çăлтăр пулса тăрать, çăлтăрăн çийне аяккалла сапаланакан пайăркасемпе витĕнтернĕ.

Çăлтăр варринче шурă эмальпе витнĕ çаврашка, ун тавра лаврăпа юман çулçисен венокне, ылттăнран тунăскерне, вырнаçтарнă, венока аялтан хĕрлĕ эмаль лентăпа çавăрса илнĕ.

Çаврашка варринче—Кутузовăн ылттăнран шăратса тунă сăнĕ, ун хыçĕнче—фон вырăнне—рубин тĕслĕ хĕрлĕ эмальпе витнĕ пилĕк кĕтеслĕ çăлтăрпа вĕçленекен Кремль башнине, кĕмĕлтен тунăскерне, вырнаçтарнă.

Кутузовăн сăнĕ тавра шурă эмаль лента çине: «Михаил Кутузов» тесе çырса хунă. Лента хĕррисем тата çырнă саспаллисем—ылттăнран.

Ылттăн çăлтăр вĕçĕсен хушшисене кĕмĕл пайăркасен пилĕк çыххипе витĕнтернĕ, вĕсем шурă эмаль лента айĕнчен тухаççĕ.

Орденăн пысăкăшĕ—ылттăн çăлтăрăн вĕçĕнчен пуçласа тепĕр хĕрринчи кĕмĕл пайăркасен çыххин вĕçне çитиччен—50 миллиметр

Орденăн знакне унăн çăртинчен тата звенoран витĕрсе илсе хĕрлĕ муаровăй лентăпа витĕнтернĕ пластинкăпа çыхăнтарнă.

Ордена тумтир çумне çакма пластинкăн тепĕр енче винтăласа каснă штифтпа гайка пур.

2. II-мĕш степеньлĕ Кутузов орденĕн знакне кĕмĕлтен тăваççĕ. Кутузовăн сăнне, лаврăпа юман çулçисенчен çыхнă венока, саспаллисемпе çаврашка кăшăлне ылттăнпа витнĕ.

АЛЕКСАНДР НЕВСКИЙ ОРДЕНĔН СТАТУЧĔ

1. **Александр Невский** орденĕпе Хĕрлĕ Çарăн командирĕсене, отечественнăй вăрçăра тăван çĕршывшăн çапăçса хăйсен паттăрлăхĕпе хастарлăхĕсене кăтартнăскерсене тата командирăн ĕçне пĕлсе туса пырса, хăйсен чаçĕсене кĕрешӳре çитĕнӳсем тума май панăскерсене, наградăлаççĕ.

2. **Александр Невский** орденĕпе СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх наградăлаççĕ.

3. **Александр Невский** орденĕпе çаксене наградăлаççĕ—

Полксен, батальонсен, ротăсемпе взводсен командирĕсене:

Тăшман çине кĕтмен çĕртен, хăюллăн та хăвăрттăн наступлени тума ăнăçлă самант суйласа илес тĕлĕшпе, боевой задани тăрăх, пуçарулăх кăтартнăшăн тата хамăр енчен сахал çухатусем тусах тăшмана пысăк сиен кӳнĕшĕн.

Боевой задание пурнăçа кĕртнĕшĕн, тĕрлĕ йышши войскăсем пĕр-пĕринпе çыхăнса кĕрешессине çирĕп те тĕрĕс организациленĕшĕн тата противникăн çапăçури йышлăрах вăйĕсене пĕтĕмĕшпех е вĕсен ытларах пайне пĕтерсе тăкнăшăн.

Артиллери подразделенине е чаçне командир пулса ертсе пырса, тăшманăн пысăкрах вăйлă артиллерине хăвăрттăн пусарса лартнăшăн е противникăн огневой точкисене, пирĕн чаçсене малалла куçма чăрмантараканскерсене, пĕтерсе тăкнăшăн, е дзотсемпе дотсен группине çапса аркатнăшăн, е тата тăшман танкĕсен пысăк ушкăнĕн атакине çирĕппĕн сирсе ярса, тăшмана пысăк сиен кӳнĕшĕн.

Танксен подразделенине е чаçне командир пулса ертсе пырса, боевой операцие ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, çав операцире противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пысăк сиен кӳнĕшĕн тата хăйсен материальнăй чаçне пĕтĕмĕшпех упраса хăварнăшăн.

Авиаподразделение е авиачаçа командир пулса ертсе пырса, темиçе боевой вĕçеве çирĕппĕн те ăнăçлăн туса ирттерсе, противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине питех те пысăк сиен кӳнĕшĕн тата хăйсен базине пĕр çухатусăр каялла таврăннăшăн.

Противникăн инженернăй сооруженисене аркатса тăкас е пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе ĕçе хăвăрттăн туса ирттернĕшĕн, пирĕн чаçсем хавхалануллă наступленире тунă çитĕнӳсене аталантарса пыма май панăшăн.

Тĕрлĕ йышши çыхăнăва татти-сыпписĕр ĕçлеттерессине тăтăшах организацилесе пынăшăн тата çыхăну пăсăлнине вăхăтра тӳрлетсе пирĕн войскăсене пысăк боевой операцисем тунă çĕрте çитĕнӳ тума май панăшăн.

Войскăсенче сахал çухатусем туса десант антармалли операцие пĕлсе тата хăвăрттăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, çапла вара противника пысăк сиен кӳрсе хамăрăн пĕтĕмĕшлĕ боевой задачăна пурнăçа кĕртес ĕçре çитĕнӳ тума май панăшăн.

Александр Невский орденĕ çинчен çырса кăтартни

Александр Невский орденĕн знакне кĕмĕлтен тăваççĕ, вăл вунă кĕтеслĕ тĕрĕс фигурăн фонĕ çине вырнаçтарнă рубин тĕслĕ хĕрлĕ эмальпе витнĕ, кăшт тулалла мăкăрăлса тăракан пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр пулса тăрать. Вунă кĕтеслĕ фигура çине тĕрлĕ еннелле сапаланакан сутă пайăркисене вырнаçтарнă. Хĕрлĕ çăлтăрăн хĕррисене ылттăнпа витнĕ.

Çăлтăр варринче—кăшăлланă çавра щит, ун çинче Александр Невскин рельефлă ӳкернĕ сăнĕ, çаврашка йĕри-тавра «Александр Невский» тесе çырнă.

Щит йĕри-тавра лаврăран çыхнă ылттăнланă венок вырнаçтарнă.

Венок турачĕсен аялти вĕçĕсене фигураллă щитокпа витнĕ, ун çинче çурлапа мăлатука ылттăнпа ӳкерсе хунă.

Сутă пайăркисен тата пилĕк кĕтеслĕ фигурăн фонĕ çине ылттăнланă икĕ бердышăн вĕçĕсене ӳкерсе хунă, бердышсем çаврашка щит хыçĕнче хĕреслĕн тытăнса тăраççĕ.

Орденăн аялти пайĕнче фигураллă щиток хыçĕнче ылттăнланă хĕç, сăнă, ухă тата çĕмренсем чикнĕ колчан пĕрпĕринпе хĕреслĕн тытăнса тăраççĕ.

Орденăн пысăкĕшĕ — хĕрлĕ çăлтăрăн пĕр вĕçĕнчен пуçласа вунă кĕтеслĕ фигурăн тепĕр енчи вĕçĕ патне çитиччен—50 миллиметр.

Орденăн знакне унăн çăртинчен тата звенoран витĕрсе илсе хĕрлĕ муаровăй лентăпа витĕнтернĕ пластинкăпа çыхăнтарнă.

Ордена тумтир çумне çакма пластинкăн тепĕр енче винтăласа каснă штифтпа гайка пур.

Лотерея билечĕсене вырнаçтарассине хăвăртрах вĕçлер

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене ултă кун хушшинче пĕтĕмпе 13.956.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем 3.072.000 тенкĕлĕх, колхозникемпе единоличниксем 10.884.000 тенкĕлĕх çыраннă.

Çак ĕçе республикăри районсенчен чылайĕшĕсем ăнăçлăн вĕçлерĕç, вĕсем укçине те çитес кунсенчех пуxса çитерессишĕн кĕрешеççĕ. Анчах лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă тата Октябрьски районсем юлса пыраççĕ. Элĕк, Советски тата Çĕмĕрле районĕсем укçа пуxас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Асăннă районсенчи партипе совет организацисем тата финанс органĕсем, малта пыракан Шупашкар, Калинински, Шăхасан тата ытти районсенчен пример илсе, лотерея билечĕсене вырнаçтарас ĕçе çывăх кунсенчех вĕçлессишĕн тата укçине те пĕтĕмпех пуxса çитерессишĕн тăрăшса ĕçлеме тивĕçлĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем! Тырă вырнă çĕрте тимлĕн ĕçлĕр, фронтпа çĕршыва ытларах тырă, промышленноçа ытларах чĕртавар пэрăр, тăшмана çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшăр!

Пысăк хăвăртлăхпа выраççĕ

ВĂРМАР, июлĕн 30-мĕш. **(Хамăр корр., телефонпа).** Районри «Хĕрлĕ Шăхаль», «Дружба», «Красная Кубня», «Тугас», «Социализм», «Путь Ленина» тата ытти колхозсем те — пурĕ 17 колхоз паян уйрăм участоксем çинче хĕрсех ыраш выраççĕ. «Комбайн» колхоз ĕнер 20 гектар ыраш вырнă. Кив Мăнтăрти «Инсарин» колхозăн пур бригадисем те ыраш вырма тухнă. Кашни бригадăрах пĕрер жнейка тата лобогрейка ĕçлеççĕ. Машинăсемпе вырнипе пĕрлех ыраша колхозниксем кĕреплеллĕ çавасемпе те выраççĕ. Кĕреплеллĕ çавасемпе выракансен ĕç пахалăхĕ пысăк. Тикĕс те пĕр тăкмасăр выраççĕ, ĕçĕн тухăçлăхĕ те пысăк.

Район уборкăна лайăх хатĕрленсе тухнă.

П. НИКОЛАЕВ.

Малтанхи кунсенчех тухăçлăн ĕçлемелле

ТАВАЙ, июлĕн 30-мĕш. **(Телефонпа).** Районри колхозсем ыраша вырăнăн-вырăнăн суйласа вырма тухрĕç. «Социализм», «Культура», «Искра Ильича», «Красное Сормово», «Пламя», «Звезда», пурĕ 14 колхоз, ыраш вырма июлĕн 28-мĕшĕнче пысăк активлăхпа тытăнчĕç. «Культура», «Искра Ильича» колхозсем ĕçе уйрăмах организованно тухрĕç. Вĕсем ыраша жнейкăсемпе выраççĕ тата кĕреплеллĕ çавасемпе çулаççĕ, ĕçĕн тухăçлăхне кунран кун вăйлатса пыраççĕ.

Анчах та пур колхозсем те тырра пулса çитнĕ май вырас ĕçе активлăн туса пымаççĕ-ха. Хăшпĕр колхозсем ыраша ытларах çурлапа вырма пăхаççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз ыраш вырма июлĕн 28-мĕшĕнче тытăннă пулсан та, паян кун та кĕреплеллĕ çавасемпе тата машинăсемпе выраccине тĕп вырăна хуман-ха. Çавăн пекех «Красное Сормово», «Пламя», «Звезда» колхозсенче те ыраша кĕреплеллĕ çавасемпе хăвăртрах çулса пуxассишĕн тивĕçлипех тăрăшни çук. Ку колхозсенче ĕçе вăхăтра тухманни тата ĕçрен ир кĕни те палăрать.

Çак малтанхи кунсенчи çитменлĕхе халех сирмелле. Ыраша машинăсемпе, кĕреплеллĕ çавасемпе ытларах вырса пĕр тăкаксăр пуxса кĕртме тăрăшмалла. Кашни жнейка, косилка тырă вырнă вăхăтра 16 сехетрен кая мар ĕçлемелле. Кашни колхозникпе колхозницăн уборка вăхăтĕнче вăхăта шутламасăр, пĕтĕм вăйран ĕçлеме тăрăшмалла.

САЛМИН.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ыраш вырма организованно тухрĕç

ШАМАРША, июлĕн 30-мĕш. **(Телефонпа).** Ĕнер районри виçĕ колхоз — «Победа», «Майăн 1-мĕш», «Светлый путь» колхозсем ыраша вырăнăн-вырăнăн суйласа вырма тухрĕç. Паян ыраш вырма чылай колхозсем тытăнчĕç.

«Победа» колхоз ĕнер хăйĕн пур бригадисемпех ыраш вырма организованно пуçăнчĕ. Малтанхи кунах кунта ыраша кĕреплеллĕ çавасемпе вырма тытăннă. Колхозăн ырашĕ кăçал нихăçанхинчен те лайăх. Колхозниксем кашни гектартан вăтам шутпа 14 центнер тĕштырă пуxса илме ĕмĕтленеççĕ. Уборкăна колхозри ĕçлеме пултаракан мĕнпур халăх тухнă. Кĕреплеллĕ çавасемпе выракансем кăна кунта 20 çын. Бригадăсемпе звеносем уборкăра пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Ыран пĕтĕм район тырă вырма тытăнать.

А. МЫШКИН.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Суйласа вырма ӳркенсе тăраççĕ

ЙĔПРЕÇ, июлĕн 30-мĕш. **(Телефонпа).** Чылай колхозсен хирĕсенче ыран-паян ыраш массăллăн вырмалла пулса çитет. Халĕ ыраш пĕтĕм участокĕпе пиççе çитессине кĕтсе тăмасăр, уйрăм участоксене суйласа илсе вырма пуçламалла. Анчах та районри колхозсем ыраш вырма паян кун та пачах тытăнман-ха. Калинин ячĕпе тăракан, Молотов ячĕпе тăракан тата «Трактор», «Красный водник» колхозсен уйĕсенче ыраш пысăк лаптăксем çинче пĕтĕмĕшпех пулса çитнĕ. Ку колхозсем тырра уйрăм вырăнсем çинче суйласа вырма июлĕн 29-мĕшĕнче тытăннă пулсан та ĕçе питĕ сӳрĕккĕн туса пыраççĕ. Кĕреплеллĕ çавасемпе çулма, машинăсемпе вырма май пур пулсан та çурлапа çеç выраççĕ.

Çавăн пекех «Победа», «Большевик», «Правда», «Коминтерн» колхозсен уйхирĕсенче те ыраш вырмалла пулнă. Анчах та колхоз руководителĕсен пуçарулăх çуккине пула ку колхозсем халĕ те тырă вырма тытăнман. Уборкăна пĕр кун кая юлмасăр тухмалла. Тырăсене пуxса кĕртес ĕçре кашни кунна, сехете шута илсе ĕçлемелле.

Д. МИХАЙЛОВ.

Пысăк тухăçлăхпа

ÇĔРПУ, июлĕн 30-мĕш. **(Телефонпа).** Июлĕн 28-мĕшĕнче «Родина», «Молодая сила», паян «Заря», «Правда» колхозсем тырă вырма массăллăн тухрĕç. Колхозниксен пĕртен-пĕр тĕллевĕ — тухăçлă пулнă тырра пĕр тăккаламасăр пуxса кĕртесси, Хĕрлĕ Çарпа çĕршыв валли ытлăн-çитлĕн тырпул туса парасси пулса тăрать. Çак задачăсене чыслăн пурнăçлама тăрăшнипе колхозниксем тырă вырма тухнă кунах лайăх кăтартрĕç.

Вăта Чăрăшри «Заря» колхоз уборкăна тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕ. Колхозăн ĕç лашисем пурте мăнтăр. Лаша кӳлмелли хатĕрсем, урапасем çителĕклĕ. Çĕнĕ тырра йышăнма çĕнĕрен 30 михĕ çĕленĕ, киввисене сапласа юсанă.

Колхозра 2 бригада. Малтанхи кунах 2-мĕш бригадăри колхозниксем (бригадирĕ Данилов) хăйсен ĕçри хастарлăхне кăтартрĕç. П. Васильева, В. Степанова, А. Карпова, П. Антонова тата ытти колхозницăсем ĕç нормине ытлашшипех тултарчĕç. А. Леонтьев машиновед жнейкăпа пĕр чарăнмасăр ыраш вырать.

Тырă вырма тухиччен колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй тата ачасен яслине организациленĕ. Колхоз правленийĕ малта пыракан звеносемпе бригадăсене пама куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав тунă тата Хисеп кăми организациленĕ. Колхоз председателĕ Петров юлташ колхоза пĕррремĕш çул çеç ертсе пырать пулсан та, ĕçре хăйĕн пултарулăхне лайăх кăтартрĕ. Колхоз тата колхозниксем уборкăна тухиччен государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмĕшпех парса татнă.

М. ЯКОВЛЕВ.

Ачасем ашканса вут-кăвар кăларассинчен сыхланар

Ялхуçалăхĕнчи хĕрӳ ĕç пуçланчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем пурте пекех уйхирте, итем çинче, анкартинче ĕçлеççĕ. Ялсенче ачасемпе ваттисем кăна юлаççĕ. Никам пăхакан çук чухне ачасем вут-кăварпа выляса пушар кăларма, пирĕн хуçалăха пысăк сиен кӳме пултараççĕ. Ачасем ашкăннипе пушар тухнисем пулаççĕ. Кăçал Шупашкар районĕнчи пĕр ялта пĕчĕк ачасем метр çурă тăршшĕ кинолентăна чĕртсе янă. пирки пушар тухнă та виçĕ кил çунса кайнă.

Ачасене пăхакан пултăр тесен, колхозсенче ача сачĕсемпе площадкисем уçас пулать. Шкулта VI—X-мĕш классенче вĕренекенсене пурне те ялхуçалăх ĕçне хутшăнтармалла, I—V-мĕш классенче вĕренекенсем ушкăнпа пухăнса вăхăта усăллă ирттерессине организацилемелле.

Пушартан сыхланма кирлĕ ĕçсене кашни килхуçин туса çитерес пулать. Кил-çурт таврашĕсене ăпăр-тапăрсенчен тасатмалла, пӳртсем çумĕнче шыв катки-пичкисем пулмалла.

Вут-кăварпа вылямa юраманни çинчен ашшĕ-амăшĕсен ачасене тĕплĕн ăнлантарса памалла. Çамрăк ачасене лампа çутма, кăвать чĕртме, кăмака хутма хушмалла мар. Çавăн пекех çамрăк ачасене чĕлĕм туртма чарас пулать. Ачасен ал айне спичка тата вут тивертмелли ытти япаласем хума, ачасене хăйсем тĕллĕн пӳрте хупса хăварма юрамасть.

Ачасем вăхăта усăллă ирттерессине организацилеме комсомол тата пионер организацийĕсен тăрăшмалла.

Пушар халăх хуçалăхне, колхоз хуçалăхне тата уйрăм çынсене пысăк сиен тума пултарнине яланах асра тытмалла, вут-кăвар тухасран сыхламалла.

И. ЖЕЗЛОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 29-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июлĕн 29-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç Воронеж районĕнче, çавăн пекех тата Цымлянская, Батайск районĕсенче тата Клетскаяран кăнтăр-хĕвеланăçнерех вырăнта хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Июлĕн 28-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 70 танкне ытла, хăйсемпе грузсем турттарса пыракан 240 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 20 лавне, горючи тултарнă 4 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 15 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн часть атакăна кĕрсе кайса, юлашкинчен штык вĕççĕн тытăçса çапăçнă хыççăн, халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан пункт патне пымалли вырăнсенче тата çав пунктри урамсенче нимĕçсен 500 вилли ытла выртса юлнă, 4 оруди, 16 пулемет, 8 миномет тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Гитлеровецсем хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тавăрма кун каçиччен виçĕ хутчен хăтланса пăхнă, анчах та çĕнĕрен 2 танк тата 150 çын çухатсан, каялла чакнă.

* *

Клетскаяран кăнтăр-хĕвеланăçнерех районра хаяр çапăçусем пыраççĕ. Совет войскисем нимĕçсем хĕснине чарса пырса, хăйсем те нимĕçсене пыра-пыра çапаççĕ. Пирĕн пĕр пехотнăй часть, танковăй подразделенипе çыхăнса кĕрешсе, малалла кĕрсе кайнă, противника аркатса тăкнă. Çав çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 1.500 çынна çити вилнĕ, 19 танк, 45 автомашина тата 60 мотоцикл пĕтнĕ. Тепĕр участокра пирĕн танкистсемпе артиллеристсем нимĕçсен 40 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Цымлянская районĕнче пирĕн войскăсем противникăн Дон шывĕ урлă каçса кайнă группировкине пĕтерес тĕлĕшпе хаяррăн çапăçнă. Халăх пурăнакан Б. пункт патĕнчи çапăçура пирĕн боецсем нимĕçсен 12 танкне, темиçе орудипе пулеметне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен, вилнисене кăна шутласан та, 800 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ. Противник пĕрмаях резервсем илсе пырса, вĕсене çавăнтах çапăçăва кĕрте-кĕрте ярать.

* * *

Батайск районĕнче наступлени туса пыракан нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çаплах йывăр çапăçусем пулса пынă. Пĕр питех те кирлĕ рубежа хӳтĕлесе, пирĕн пехотнăй соединени, танксемпе авиаци пулăшнипе, кун каçиччен нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çын ытла вĕлернĕ, вĕсен 28 танкне тата 15 орудине пĕтерсе тăкнă. Разведка взвочĕн политрукĕ Нечаев юлташ противникăн наступлени тăвакан группин çулĕ çинче засада тунă. Тăшмана çывăхах ярса, боецсем пеме пуçланă. Нимĕçсем нимĕн йĕркисĕр каялла чакнă, çул çинче вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсем 100 çынна яхăн вилсе юлнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине артиллерирен персе тăнă. Икĕ кун хушшинче пирĕн артиллери тата разведка групписем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна ытла вĕлернĕ тата вĕсен 4 орудине, боеприпассемпе продовольстви тиенĕ 10 лавне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Лобанов юлташ ертсе пыракан подразделенири красноармеецсен пĕр ушкăнĕ противникăн траншейисемпе блиндажĕсене çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та штык вĕççĕн пынă çапăçура 40 гитлеровеца ытла пĕтерсе пăрахнă. 3 пулемет, пĕр миномет тата ытти трофейăсем тытса илсе, боецсем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Калинин облаçĕнчи партизансен М. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ чугунçулăн пĕр участокĕ çине минăсем лартса тухнă. Çав минăсем çине пулса противникăн виçĕ поезчĕ сирпĕнсе кайнă, вĕсенчен пĕри çар эшелонĕ пулнă. Туллимар сведенисем тăрăх, оккупантсем 500 çын ытла вилнĕ тата аманнă.

* * *

Нимĕçсен 695-мĕш пехотнăй полкĕн 6-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Вальтер Толлькюн çапла каласа панă: «Пирĕн полк нумай вăхăт хушши Ламанш çыранĕсенче, Лилль хулинчен (Франция) 120 километрта тăчĕ. Май уйăхĕнче эпир унтан тухса кайма приказ илтĕмĕр. Офицерсем пире Югославие каятпăр терĕç. Варшава хулине çитсен, эпир пире Хĕвелтухăç фронтне илсе кайнине ăнланса илтĕмĕр. Июлĕн 11-мĕшĕнче эпир малтанхи хут çапăçура пултăмăр. Вырăссен танкĕсемпе пехоти пирĕн ротăна çавăрса илчĕç те аркатса тăкрĕç. Эпир 15 çын кăна чĕррĕн тăрса юлтăмăр, вара пурте тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Нумай колхозсем государствăна тырă, аш-какай тата чĕртавар срокчен парса татаççĕ. Калмык АССР-ĕнчи Юстински улусĕн «Улан Хальмг» ятлă ялхуçалăх артелĕ государствăна 13.200 пăт тулă, ыраш тата урпа панă. Хаккас автономиллĕ облаçĕн Шарыповски районĕнчи «Сибирский партизан» ятлă артелĕнчи колхозниксем аш-какай тăратас плана ирттерсе тултарнă. Аджарин Кедски районĕнчи колхозниксем аш-какай тăратас плана срокчен тултарнă. Таджик ССР-ĕн Гармски районĕнчи пурçăн хурчĕ усракансем государствăна планран ирттерсе 22 тоннăна яхăн кокон панă.

Июлĕн 30-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июлĕн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç Воронеж районĕнче, çавăн пекех тата Цымлянская, Батайск районĕсенче тата Клетскаяран кăнтăр-хĕвеланăçнерех вырăнта çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Воронеж районĕнче темиçе участокра пирĕн войскăсем, противник вирлĕн хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçса пынă. Пирĕн пĕр часть противника халăх пурăнакан пĕр пунктран хĕссе кăларнă, противникран 3 оруди, 4 миномет, 7 станковăй пулемет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски чаçри боецсем противникăн контратакине сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен 450 салтакпа офицерĕ вилнĕ.

* * *

Батайск районĕнче йывăр çапăçусем пыраççĕ. Противник темиçе хут атака туса, уйрăм участоксенче малалла куçнă. Пирĕн боецсем халăх пурăнакан О. пункчĕ патĕнче тăшман хĕснине пĕр талăк хушши тытса чарса тăнă. Пирĕн позицисем патне пымалли вырăнсенче нимĕçсен 19 танк тата 900 çын пĕтнĕ. Тепĕр участокра пирĕн часть противникăн танковăй атакине сирсе янă, çавăн чухне нимĕçсен 8 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетскаяран кăнтăртарах районра противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç хаяр çапăçусем пынă. Гитлеровецсем пирĕн оборонăна саваланса кĕме хăтланнисем ăнăçлă пулман. Фронтăн пĕр участокĕнче пирĕн танксен чаçĕ атака тунă. Нимĕçсен 30 танкне тата темиçе çĕр салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Цымлянская районĕнче совет летчикĕсем противникăн Дон шывĕн кăнтăр енне каçнă группировкине темиçе хут пыра-пыра çапнă. Авиаци бомбăсем пăрахса хатĕрленĕ хыççăн пирĕн танксемпе пехотăн чаçĕсем темиçе хут ăнăçлă контратакăсем тунă. Нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерне, 17 танкне, 11 орудине тата 27 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Хăшпĕр участоксенче противник пысăк вăйсем пухса тăратнă, вăл унта пирĕн оборонăн линине татма тăрăшать. Совет войскисем тăшманăн атакисене сире-сире ярса, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине çапса ватса пыраççĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче разведка тăвакан отрядсем активлăн ĕçленĕ. Старши лейтенант Филимоненков командир пулса ертсе пыракан боецсем, нимĕçсен тылне кĕрсе кайса, нимĕçсен гарнизонне кĕтмен çĕртен пырса тапаннă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Çав отрядăн старшини Куракин юлташ тата красноармеец Скипкин юлташ чугунçул рельсисене сӳтсе илсе, нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Смоленск облаçĕнче кĕрешекен партизансен «Батя» ятлă отрячĕ июлĕн 20 кунĕ хушшинче 600 гитлеровеца çити вĕлернĕ, чугунçул çинчи 8 состава сирпĕнтерсе янă тата противникăн 2 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Партизансем нимĕçсенне пĕр танк, темиçе автомашина пĕтерсе тăкнă тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 88-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 246-мĕш полкран тыткăна лекнĕ штабс-фельдфебель И. Эдер çапла каласа панă: «Пирĕн полк пĕр кун хушшинчех хăйĕн составĕн çуррине ытла çухатнă. Виççĕмĕш батальона пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Çав батальонран мĕнпурĕ те 10—15 салтак çеç чĕрĕ юлнă, вĕсем тыткăна парăннă. Дивизири ытти полксем те калама çук пысăк çухатусем тӳснĕ, вĕсем пуринчен ытла вырăс миномечĕсенчен пенипе пысăк сиен курнă».

* * *

Финсен 11-мĕш пехотнăй полкĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçса килнĕ салтак Р. Калле çапла каласа панă: «Пирĕн полкри 2-мĕш батальон наступлени тумалли çинчен приказ илсен, салтаксенчен нумайĕшĕ тарса саланнă. 130 çынна вара тытнă. Вĕсене Кестенгăри тĕп гауптвах тăна лартнă, вĕсене çар судне панă. Финн салтакĕсем вырăс снайперĕсем çинчен мухтаса калаçаççĕ. Вĕсем питĕ те лайăх переççĕ, теççĕ. Лăпкă тăнă вăхăтра та снайперсем куллен пирĕн ротăри 3—5-шер çынна вĕлерсе пынă. Нумаях пулмасть вырăс снайперĕ ротăн командирне Тенкюря капитана вĕлернĕ.

* * *

Акмолинск облаçĕнче пучахла тырăсене вырма тытăнман-ха; апла пулин те колхозсем государствăна пĕлтĕрхи тырра параççĕ. Хатĕрлев пунктсĕсене 500 пин пăт тырă пырса çитнĕ те ĕнтĕ.

Агитаторсене пулăшма

Ялти агитаторсен задачисем

1. Вăйлă тырпула хăвăрт тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртмелле

Колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенчи вăйлă тырпул пулса çитет. Ялхуçалăх çулĕн чи ответлă тапхăрĕ — тырпул пухма массăллăн тухас вăхăт килсе çитрĕ.

Вăрçă кунĕсенче колхозсемпе совхозсенчи квалификациллĕ рабочисен йышĕ, чĕрĕ туртăм вăйĕ тата тракторсем сахалланчĕç, çав вăхăтрах тырă лаптăкĕ пысăкланчĕ. Анчах пур йывăрлăхсене те çĕнтерес пулать, тырпулсене хăвăрт тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртмелле. Колхозниксемпе колхозницăсен, ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсен пурин те çавтери организованно тата дисциплинăллă пулас пулать, мĕнпур вăя парса ĕçлемелле.

Уйхирте ырми-канми, икĕ çыншăн, виçĕ çыншăн ĕçлесе пырас пулать. Фронтра çĕнтерӳ тума совет халăхĕн тимлĕн тата харпăрхăйне шеллемесĕр ĕçлесе Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшса пымалла. Тылри работниксен фронтра çĕнтерӳ тума мĕн кирлине çар валли йăлтах парса тăрас пулать, пуринчен малтан çар тутă пулассишĕн, ăна тумлантарассишĕн тăрăшмалла.

Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртни, колхозсемпе совхозсем государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултарни 1942 çулта нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкмалли условисенчен пĕри пулса тăрать.

Пирĕн ялти агитаторсем политикăллă ĕçе массăсем хушшинче мĕн чухлĕ анлăрах сараççĕ, тырпулсене пухса кĕртессипе государствăна тырă тăратасси çавăн чухлĕ ăнăçлăрах пулса пырĕç. Агитаторсен, мĕнпур коммунистсемпе комсомолецсен умĕнче калĕ ялти пĕтĕм массăна ĕçе мобилизацилессинчен, ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсене пурне те Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнтарассинчен пысăкрах та ответлăрах задача урăх çук.

Планран ирттерсе пухнă тырăн кашни пăчĕ вăл — нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çапни. Тырпулсене пухса кĕртесси вăл — фронтах пулни, харпăрхăйне шеллемесĕр ĕçлесе тырпулсене тĕплĕн тата вăхăтра пухса кĕртме пулăшакан колхозник вăл — боец пулса тăнине ăнланса илме агитатор колхозниксене тата ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсене пурне те пулăшсан, ун чухне ĕç ăнăçлă пуласси пирки шанчăклăнах калама пулать.

Партипе правительство ялхуçалăх тĕлĕшпе юлашки вăхăтра йышăннă решенисене ăнлантарса парас ĕçе çине çинех туса пымалла; тăрăшса ĕçлекен колхозник, тракторист е комбайнер ĕçкунĕсем тăрăх тырпул тата укçа нумайрах илессине кăтартса памалла.

Агитатор умĕнче тăракан пысăк задача—государствăна тырпул тăратмалли обязательствăсене тата МТС ĕçĕшĕн натуроплата вăхăтра парса татни мĕн пек пысăк вырăнта тăнине ăнлантарса парасси. «Малтан çапнă чи лайăх тырра государствăна парар!», «Государство умĕнчи обязательствăсене пурне те срок çитиччĕнех тултарар!»—çак лозунгсемпе туса пымалла агитаци ĕçне.

Вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах сыхăлăхлă пулни кирлĕ. Фронт çывăхĕнче те, шалти тылри районсенче те нимĕçсен агенчĕсем, сăтăрçисем, диверсанчĕсем вăрăсем пулма пултараççĕ, вĕсем пирĕн тырпулсене вут тивертсе яма, тырпула пĕтерме, çаратма хăтланĕç. Колхоз пурлăхне çивĕччĕн сыхлас пулать. Кашни ĕççыннинех çакна ăнлантарса памалла: тăшман чее тата темĕнле ирсĕр ĕçсем те тума хатĕр, тăшман чĕртнĕ пĕр спичкăран пĕтĕм колхозăн тырпулĕ, çĕршер çынсен ĕçĕ усăсăр пĕтме пултарать. Агитаторăн обязанноçĕ — колхозниксене сыхăлăхлă пулма воспитани парас, вĕсен революциллĕ сыхăлăхне ӳстерес ĕçсене куллен туса пырасси.

Кăçал тырпулсене пухса кĕртессинче пур средствăсемпе те, комбайнран пуçласа çурласем таранах, усă курас пулать. Тырпула çавапа çулса пухма, жнейкăсемпе, лобогрейкăсемпе вырма, комбайнсемпе вырса пухма вырăнăн-вырăнăн сийласа илсе тытăнмалла.

Кăçал тырпулсене пухса кĕртессинче колхозниксем питех те организованно пулни, ĕçри дисциплинăна çирĕппĕн пăхăнса пыни кирлĕ. Хастарлă та хăвăрт ĕçлемелле. Пĕр сехет кая юлсан та тырпул сая кайма пултарать. Коммунистсен, комсомолецсен, агитаторсен массăсем хушшинчи политикăллă ĕçе çак енĕпе туса пырас пулать: уборка вăхăтĕнче пĕр кун та усăсăр ан ирттĕр, хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче пĕр колхозник та, пĕр колхозница та, пĕр çамрăк та сĕтĕрĕнсе ан çӳретĕр.

Уборкăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах ĕçре çирĕп дисциплина тăвас пулать. Артель ĕçĕ çинче ларакан кахалсене, ĕçсĕр çапкаланса çӳрекенсене, харампырсене тăрă шыв çине кăларса пымалла. Кахал тата ĕçсĕр çапкаланса çӳрекен çын вăрçă вăхăтĕнче — тăшмана тӳрремĕнех пулăшакан çын. Начар ĕçлекенсем, ĕçе кая юлса тухакансемпе ĕçе тухманнисем пулсан, вĕсем пирки çийĕнчех бригадăра, звенора сӳтсе-явмалла.

Агитаторăн задачи çакăнта пулса тăрать: пур çынсене те тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хутшăнтарма бригадира пулăшмалла, колхозниксене шурăмпуçĕнчен пуçласа хĕвел аничченех хăйсене шеллемесĕр ĕçлеме мобилизацилемелле.

Анчах çынсене ĕçе явăçтарнипех çителĕклĕ мар-ха. Вĕсен ĕçне пĕлсе организацилемелле, вĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла, бригадăра большевикла çирĕп йĕркелĕх тума бригадира пулăшмалла, ним йĕркесĕр арпашни пулмалла мар, кашнине задани парас пулать, кашни хăйĕн ĕç нормине аван пĕлтĕр, унăн ĕçне тĕрĕс шута илсе пымалла, тăрăшса ĕçлекенсене ĕçкунĕсем çумне хушса тӳлессине пурнăçа кĕртмелле.

Государство машинно-тракторнăй станцисене нумай миллионшар тенкĕлĕх горючи парать. Горючие перекетлесси — вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи пысăк задача. Агитаторсен трактористсемпе комбайнерсене усăллă каналсем парас пулать, горючие ытлашши тăкаклани мĕн пек пысăк сиен кӳнине ăнланса илме пулăшмалла, горючие перекетлеме вĕрентмелле. Ăмăртăва хутшăннă малта пыракан МТС-сем кăçал горючие 10 процентран пуçласа 14 процент таран перекетлеме пулчĕç. Çав обязательствăсене пурнăçа кĕртме МТС-сене пулăшасси, горючие перекетлессишĕн чăн-чăн ăмăртăва анлăн сарасси — агитаторăн тивĕçлĕ ĕçĕ.

Колхозсенче, совхозсенче тата машинно-тракторнăй станцисенче тырпулсене пухса кĕртессине ăнăçлăн, организованно ирттерме условисем тата майсем пурте çителĕклĕ. Çав майсемпе тата резервсемпе пĕлсе усă курас пулать. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçри ăнăçлăх çынсенчен, колхозниксенчен, совхозсемпе МТС-сен рабочийĕсенчен хăйсенчен тата вĕсен руководителĕсенчен килет.

Отечественнăй аслă вăрçă фронтĕсенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Укерчĕк çинче: Н-ски мото-инженернăй чаçри саперсем юхан шыв урлă каçă хываççĕ.

М. АЛЬПЕРТ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Воронеж районĕнчи хаяр çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 29-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Воронеж районне татса кĕнĕ фашистла войскăсене хирĕç пыракан çапăçусем çаплах лăпланмаççĕ. Совет чаçĕсем гитлеровецсене тытса чарнă çеç мар, вĕсем гитлеровецсене тата вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Енер Воронежран çурçĕр-хĕвеланăçнерех вырăнта вăйлă çапăçусем пынă. Хуларан кăнтăртарах вырăнта та хаяр тытăçусем пуçланса кайнă. Тăшман нумай участоксенче контратакăсем тума хăтланать. Нимĕçсен командованийĕ Воронеж районне пехотăпа танксем иле-иле пырать. Донăн хĕвеланăç хĕрринче гитлеровецсем совет чаçĕсене хĕсме хăтланса пăхнă. Тăшманăн планĕ арканса кайнă. Боецсем фашистсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă.

Вăрмансенчи рубежсенче юнлă çапăçусем пуçланса кайнă. Красноармеецсен атакисене сирсе пырса, нимĕçсем икĕ хутчен контратакăсем тунă. Фашистсен пехотин пĕрремĕш контратакине танксем хӳтĕлесе пынă, артиллерипе минометсем вăйлăн персе тăрса пулăшса пынă, çав контратака ирхине 10 сехетре пуçланнă. Пирĕннисем вăйлăн персе тăрса, гилеровецсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Кăнтăрла фашистсем хăйсен аманнă тата вилнĕ çыннисене пуçтарнă тата хăйсен вăйĕсене урăхла май йĕркеленĕ. Çĕрле вĕсем вара каллех пирĕн позицисене штурмлама тытăннă. Пирĕн боецсем хастарлăн та çирĕппĕн çапăçнă. Вĕсем каялла чакиччен луччĕ вилес тесе çапăçнă. Паян çав участокра çапăçусем малтанхи рубежсенчех пынă. Çĕнĕ вăй хушса парсан, противник пирĕн шыв урлă каçмалли кĕпер районĕнче наступлени тума тытăннă. Çапăçăва венгерсен чаçĕсене кĕртсе янă. Тăшманăн атакисене пирĕннисем сирсе пăрахнă. Венгерсен пĕр батальонне аркатса тăкнă. Противника халран ярсан, пирĕн боецсем вара активлă çапăçусем пуçласа янă. Тăшманăн оборонин линине Н-ски часть уйрăмах вăйлăн штурмлать, вăл çапăçура çирĕплĕхпе хăйĕн пурнăçне шеллеменнине кăтартать. Пирĕн войскăсене совет летчикĕсем калама çук хаклă пулăшу параççĕ. Вĕсем противника кăнтăрла та, çĕрле те штурмлаççĕ, унăн шыв урлă каçмалли кĕперĕсене çĕмĕреççĕ, пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Енер летчиксем нимĕçсен 18 танкне, 62 автомашинине, пĕр бронемашинине çунтарса янă, стройран кăларнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, 2 зенитнăй орудине тата артиллерин 2 батарейине пусарса лартнă, сывлăшри çапăçура нимĕçсен 5 истребительне персе ӳкернĕ.

Çапăçу вут-çулăмĕнче совет воинĕсем паттăррăн ĕçлеççĕ. Лейтенант Плехановăн взводĕнчи боецсем фашистсен икĕ подразделенин темиçе атакине сирсе янă, вĕсенчен 4 пулемет, 9 автомат, 7 винтовка тытса илнĕ. Тепĕр чаçри боецсем нимĕçсене икĕ хут атакăланă. Нимĕçсем питĕ хаяррăн хирĕç тăнине сирсе пăрахса, вĕсем тăшмана лаха позицисенчен хăваласа кăларнă. Фашистсен пехоти пĕр батальона çити пĕтнĕ.

Пирĕн бронебойщиксем хастарлăн çапăçаççĕ. Филиппов юлташ политрук пулса тăракан подразделение нимĕçсен 40 танкĕ атакăланă. Михеев боец питĕ йывăр участокра пулнă. Меллĕ огневой позици йышăнса, вăл противотанковăй пăшалтан нимĕçсен машинисене питĕ тĕл пенĕ. Акă фашистсен пĕр танкне вут хыпса илнĕ. Нимĕçсен тепĕр танкĕ пирĕн боецăн окопĕ çине кĕрсе кайнă та боецăн противотанковăй пăшалне таптаса çĕмĕрнĕ. Гитлеровец, Михеевăн нимĕн тума та çуккине курса, танк люкне уçнă та «русс, капут, здавайся» тесе кăшкăрнă. Боец, винтовкăран персе ярса, тепĕр окопа чупса кĕнĕ. Унта иккĕмĕш противотанковăй пăшал пулнă. Михеев ăна ярса тытнă та нимĕçсен иккĕмĕш танкне персе çĕмĕрнĕ.

Ротăн политрукĕ Филиппов гранатăсен çыххисене пăрахса, нимĕçсен окопсем патнех пырса çитнĕ танкне çĕмĕрнĕ. Аманнăскер, ыратнине пăхмасăр, вăл çывăхарса пыракан броньăланă машинăсем çине çаплах гранатăсем ывăтса тăнă. Нимĕçсен танкĕсем вара каялла çавăрăнса кайнă.

Воронеж районĕнче халĕ те хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Г. КРЫЛОВ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Ăмăрту результачĕсем

СЕНТЕРВАРРИ, июлĕн 30-мĕш. (Телефонпа). Социализмлă ăмăртура судоверфь коллективĕ (директорĕ И. Жилочкин юлташ) хăйĕн çитĕнĕвĕсене çирĕплетсех пырать. Паян вăл июль уйăхĕнчи программăна 130 процент тултарчĕ. Çак çĕнĕ çитĕнӳ — бригадăсем тата рабочисем хушшинчи ăмăртăва лайăх организацилени результачĕ. Нормăна ирттерсе тултаракан рабочисене ĕçукçи хушса тӳлеççĕ, таварсем параççĕ, укçан премилеççĕ, вĕсен ĕçĕсем çинчен пурне те пĕлтереççĕ, стена хаçатĕнче çыраççĕ. Çапла туни рабочисен ĕçлес кăмăлне çĕклет, ĕç тухăçлăхне ӳстерет. Белов, Войнов, Староверов, Борзов тата Сивов плотниксем июль уйăхĕнче нормăна кашни кун 210-шар процент тултарса ĕçлерĕç. Çавăн пекех тимĕрçсем К. Кривичкин, Семенов юлташсем 168-шар процент, Ф. Кривичкин, Попов юлташсем 150-шар процент тултарса пычĕç.

Районри артельсем хушшинчи ăмăртура «Париж Коммуни» артель (правлени председателĕ Калмыкова юлташ) малта пырать. Вăл июль уйăхĕнчи ĕç планне 25 кун хушшинчех 107 процент тултарчĕ. Юлашки ултă кун хушшинче артель коллективĕ планран ирттерсе чылай продукци парать.

Артельри цехсенчен тир-сăран тăвакан, çăматă йăвалакан, атă-пушмак çĕлекен тата юсакан цехсем уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте уйăхри плана ирттерсе тултарнă. Атă-пушмак çĕлекен тата юсакан цехри Михайлов, Трифонов, Чихин тата Брагина рабочисем нормăна тăтăшах 150—170-шер процент тултараççĕ, Камбулова Ярисов юлташсем 170—200 процента çитереççĕ.

Паян ĕнерхинчен, ыран паянхинчен лайăхрах ĕçлемелле — çакăн пек вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсен ĕмĕчĕ.

К. СОСНИН,
Райсовет исполкомĕн вырăнти промышленность отделĕн заведующийĕ.

Фронт валли, Хĕрлĕ Çар валли

Шупашкарти «Красный мебельщик» промартель июль уйăхĕнчи васкавлă заданисене срокчен тата ытлашшипех пурнăçларĕ. Артель коллективĕ çак кунсенче фронт валли заданирен ирттерсе продукци парать.

Васкавлă заданисене пурнăçлас тĕлĕшпе ку уйăхра механически тата сборочнăй цехсем начар мар ĕçлерĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çара кирлĕ продукцисене пĕр кăлтăксăр кăларса тăчĕç. Механически цехри станочниксем Челимова, Алексеева, работница Каранина юлташсем нормăна икĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Сборочнăй цехри çамрăк рабочисем Галиуллинпа Каменский юлташсем те икшер норма тултарса ĕçлеççĕ.

В. ЕГОРОВ,
(Правлени председателĕ.

Чугунçул çинче

ЙĔПРЕÇ. Буинск поселокĕнчи вĕренекенсем, шкул завхозĕ И. Рубцов юлташ ертсе пынипе, Киря патĕнчи чугунçул линийĕ çинче ĕçлеççĕ. Вĕсенчен М. Шулова, А. Иванов тата Рубцов ачасем уйрăмах тухăçлăн ĕçлеççĕ. Бригада кулленхи нормăна вăтамран 120 процент тултарать.

И. МИТЯСЬ.

Ютçĕршывсенче

Англи самолечĕсем Гамбург çине çĕнĕрен вĕçсе пырса тапаннă

ЛОНДОН, июлĕн 29-мĕш. (ТАСС). Июлĕн 29-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем каллех Гамбург çине вĕçсе пырса тапаннă. Унсăр пуçне тата Голландири аэродромсене тата оккупациленĕ Францири чугунçулсемпе ытти объектсене атакăланă.

К Ĕ С К Е Н

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар министерстви çĕнĕрен виçĕ эсминец туса пĕтерсе шыв çине кăларса яни çинчен пĕлтернĕ.

* * *

Япония вăрçа хутшăннăранпа Канадăра Японин пулă тытса çӳренĕ 1.000 суднине ытла тытса илнĕ. Çав суднăсем халь Канада ялавĕпе ишсе çӳреççĕ.

* * *

Мексикăн генеральнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Норвегин «Кадмус» ятлă грузовой пароходĕн командинчен çăлăнса юлнă 19 çын Мексика çыранне çитсе аннă; çав пароход июнĕн 30-мĕшĕнче Мексика заливĕнче торпеда ярса путарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 398. Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.